27-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 ДЕКАБРЬ 3 ВЫРСАРНИКУН 237(6732) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Украинӑри 3-мӗш фронт çарӗсен командующине Совет Союзӗн Маршалне **ТОЛБУХИНА**

Фронт штабӗн начальникне Генерал-лейтенанта **ИВАНОВА**

УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт çарӗсем, малалла наступлени туса пырса, икӗ кун хушшинче Венгрин округ тата район центрӗсене СЕКСАРД, КАПОШВАР, ПАКШ, БОНЬХАД, ДОМБОВАР хулисене — çул йӗрсен пысӑк узелӗсене тата тӑшман оборонин питех те паха тӗреклетнӗ пункчӗсене туртса илнӗ, çавӑн пекех тата, тӑшманпа çапӑçса, халӑх пурӑнакан ытти 300 пункта ытла тытса илнӗ.

СЕКСАРД, КАПОШВАР, ПАКШ, БОНЬХАД тата ДОМБОВАР хулисене туртса илессишӗн çапӑçнӑ чухне çаксем чапа тухнӑ: арми генералӗн ЗАХАРОВАН, ШАРОХИН генерал-лейтенантӑн, БИРЮКОВ генерал-майорӑн, БОБРУК генерал-майорӑн, МОРОЗОВ генерал-лейтенантӑн, МОШЛЯК полковникӑн, ЧИЖОВ полковникӑн, ДРЫЧКИН полковникӑн, БРАНСБУРГ подполковникӑн, ГОРБАЧЕВ генерал-майорӑн, ПЕТРУШКИН полковникӑн çарӗсем; артиллери генерал-полковникӗн НЕДЕЛИНАН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ВОЗНЮКАН, артиллери генерал-майорӗн ЦИКАЛОН, БОХАРЕВИЧ полковникӑн, артиллери генерал-майорӗн РАТОВАН, ЛИННИК полковникӑн, ЧЕПУРИН подполковникӑн, МЕЛЬКОВСКИЙ полковникӑн, РОМАНЦОВ подполковникӑн артиллерисчӗсем; Дунай çинчи çар флотилийӗн вице-адмирал ГОРШКОВ, II-мӗш рангри капитан ДЕРЖАВИН, СМИРНОВ полковник ертсе пыракан чаçӗсемпе карапӗсем; танковӑй çарсен генерал-лейтенанчӗн СУХОРУЧКИНАН танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн СУДЕЦАН летчикӗсем; инженери çарӗсен генерал-полковникӗн КОТЛЯРАН, МАЛОВ полковникӑн, КОРНЕЕВ подполковникӑн саперӗсем; çыхӑну çарӗсен генерал-лейтенанчӗн КОРОЛЕВАН, СУХИХ подполковникӑн связисчӗсем.

Тунӑ çӗнтерӗве ялан лӑха палӑртса хӑварас тесе, СЕКСАРД, КАПОШВАР, ПАКШ, БОНЬХАД тата ДОМБОВАР хулисене туртса илессишӗн çапӑçнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаçсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, декабрӗн 2-мӗшӗнче, 20 сехетре хамӑр Тӑван çӗршыв столици МУСКАВ, Украинӑри 3-мӗш фронтӑн паттӑр çарӗсене, вӑл шутрах — Дунай çинчи çар флотилийӗн чаçӗсемпе карапӗсене те, СЕКСАРД, КАПОШВАР, ПАКШ, БОНЬХАД тата ДОМБОВАР хулисене туртса илнӗскерсене, Тӑван çӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, СЕКСАРД, КАПОШВАР, ПАКШ, БОНЬХАД тата ДОМБОВАР хулисене туртса илессишӗн çапӑçнӑ çӗрте пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ çапӑçнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван çӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн çапӑçса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗç захватчикӗсене вилӗм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ **И. СТАЛИН.**

1944 çулхи декабрӗн 2-мӗшӗ.

ПОТРЕБКООПЕРАЦИНЧИ ОТЧЕТПА СУЙЛАВ КАМПАНИЙӖ

Декабрӗн 1-мӗшӗпе 26-мӗшӗ хушшинче пирӗн республикӑри ялпосемпе райпотребсоюзсенче отчетпа суйлав кампанийӗ пулса иртет. Çак кампанин задачи— райпотребсоюзсемпе ялпосен правленийӗсене, контрольпе ревизи комиссийӗсене, общественнӑй контролерсене, лавка комиссийӗсене тата столовӑйсен комиссийӗсене тӳрӗ кӑмӑлпа тата ӗçе парӑнса ӗçлекен çынсене суйласа лартасси, кооперации членӗсем хӑйсен суйланӑ органӗсен ӗçӗсене контроллесе тӑрассине вӑйлатасси, çапла вара потребкооперацин пӗтӗм ӗçне лайӑхлатасси пулать.

Потребкооперации вӑл пирӗн халӑх хуçалӑхӗн системинче пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Хальхи вӑхӑтра ӑна ответлӑ задачӑсене пурнӑçлама хушнӑ: унӑн ялти халӑха, вырӑнти ресурссемпе усӑ курса, апатçимӗç тата промышленность таварӗсем парса тӑмалла, вырӑнсенче ялхуçалӑх продукчӗсем хатӗрлес ӗçӗн чылай пысӑк пайне пурнӑçа кӗртмелле.

Отечественнӑй вӑрçӑ çулӗсенче пирӗн нумай ялпосемпе райпотребсоюзсем Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура малти вырӑна тухрӗç. Вӑрмар райпотребсоюзӗ СССР-па РСФСР Центросоюзӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме пултарнӑ. 1943 тата 1944 çулсенче кӑна пирӗн республикӑри лавкасемпе магазинсене 17 хутчен, хатӗрлев конторисене пӗр хутчен, ялпосене 5 хутчен, райпотребсоюзсене 4 хутчен премиленӗ. Иртнӗ çулта государство валли тырӑ сутӑн илес ӗçе ӑнӑçлӑн иртернӗшӗн Чӑвашсоюза пӗрремӗш преми панӑ.

Отчетпа суйлав кампанийӗ ялпосемпе райпотребсоюзсен ӗçне тата та ытларах лайӑхлатма, кая юлакансене малтисемпе танлаштарма пулӑшмалла.

Отчетпа суйлав кампанийӗ пирӗн таварçаврӑнӑш планне, ялхуçалӑх продукчӗсем хатӗрлемелли плана, тупӑш планне, пай укçи пухмалли плана, çынсене кооперацие явӑçтармалли плана пурнӑçланипе, укçана питӗ перекетлӗн расходланипе тата потребкооперации пурлӑхне çаратассине, вӑрлассине, салатса пӗтерессине пӗтӗмпех пӗтерсе лартнипе çыхӑнтарса пымалла. Отчетпа суйлав пухӑвӗсенче ялпосемпе райпотребсоюзсен ӗçӗнчи çитменлӗхсене критиклесе, вӗсене пӗтермелли майсем палӑртса хӑвармалла.

Çакна шута илес пулать: пирӗн ялпосем вырӑнти чӗртавартан тӑвакан куллен кирлӗ таварсемпе тата апат-çимӗçпе çителӗклӗ сутӑ тумаççӗ-ха, тавар тӑвакан организацисене хӑйсене мӗн чухлӗ тавар, мӗнле пахалӑхлӑ тата мӗнле йышши таварсем кирли çинчен çирӗп каласа памаççӗ, потребитель мӗн ыйтнине тӗпчесе вӗренмеççӗ.

Çаксене пула ялпосемпе райсоюзсен склачӗсенче кайман таварсем темиçе миллион тенкӗлӗх выртаççӗ. Çак пысӑк çитменлӗхе Чӑваш АССР Верховный Совечӗн VIII-мӗш Сессийӗнче хытӑ критиклерӗç.

Кооперации работникӗсем çаврӑнӑçусӑр ӗçленӗ пирки ялти çынсене час-часах çӑкӑр вӑхӑтра памаççӗ. Пекарньӑсемпе армансен ӗçне халиччен те йӗркелесе ярайман районсенче çак тӗлӗшпе уйрӑмах пысӑк çитменлӗхсем пулнӑ. Халӑхӑн чи кирлӗ нушисене тивӗçтерессисине çавӑн пек киревсӗр пӑхнине чӑтма юрамасть.

Пирӗн потребкооперации вырӑнсенче çӗрулмипе пахча-çимӗç хатӗрлес ӗçе те çителӗксӗр туса пырать. Çӗрулмипе пахча-çимӗç хатӗрлемелли плана пӗтӗм республикипе паянхи куна 60 процентран ытла пурнӑçламан. Çак ӗçе Советски, Хӗрлӗ Чутай, Элӗк, Йӗпреç, Канаш тата ытти райпотребсоюзсем те уйрӑмах кая юлса пыраççӗ.

Тавар çаратнине, вӑрланине, салатса янине хирӗç начар кӗрешеççӗ-ха. Кӑçал Шупашкар тата Улатӑр районӗсенче çӗршер пин тенкӗлӗх ытла тавар салатса янӑ. Çак тӳсме çук фактсем вӗсем суту-илӳ системинче ӗçлекен çынсене çителӗклӗ тӗрӗслеменнипе, шанчӑксӑр çынсенех ытлашши шаннипе пулнӑ. Тавар вӑрлани, ӑна салатса пӗтерни тата çакӑн пирки те пулать: пирӗн тавар мӗн чухлӗ сутнине час-часах питӗ начар тӗрӗслеççӗ, учета япӑхтарса янӑ, таварсене турттарса килме е турттарса кайма час-часах çителӗклӗ тӗрӗслемен çынсене хушаççӗ. Салатса пӗтернӗ укçана айӑплисенчен питӗ майӗпен шыраса илеççӗ, судпа следстви органӗсем хӑшпӗр чухне кооперации пурлӑхне вӑрлакансемпе кӗрешес ӗçе çине тӑрса туса пымаççӗ.

Финанс дисциплинине çирӗплетни, учет япӑхса кайнине пӗтерни, пур сыпӑксенче те контроле вӑйлатни, кадрсем тӗлӗшпе ӗçлес ӗçе татӑклӑнах лайӑхлатни, — çаксем кирлӗ халӗ кооперации ӗçне лайӑхлатма тата вӑйлатма.

ВКП(б) Обкомӗ парти райкомӗсене отчетпа суйлав кампанине иртерес ӗçре райпотребсоюзсемпе ялпосене практикӑллӑ пулӑшу пама хушрӗ. Потребкооперацин ӗçне парти организацийӗсем ертсе пырассине хальхи вӑхӑтра — отчетпа суйлав кампанийӗн ответлӑ тапхӑрӗнче татах та вӑйлатмалла. Отчетпа суйлав пухӑвӗсене пур пайщиксене те явӑçтармалла. Районсенчи хаçатсен отчетпа суйлав кампанийӗ мӗнле пыни çинчен тӑтӑшах çырса тӑмалла, чи лайӑх ӗçлекен райпотребсоюзсемпе ялпосен ӗçне кӑтартмалла, ӗçри çитменлӗхсене палӑртса памалла, çапла туса потребкооперацин пӗтӗм ӗçне лайӑхлатма пулӑшмалла.

Отчетпа суйлав кампанийӗнче пирӗн ялпосемпе райпотребсоюзсене çине тӑрса çирӗплетмелле. Çакна тӑвас тесен, отчетпа суйлав кампанине иртерес ӗçе пӗтӗм общественноçа явӑçтармалла.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ДЕКАБРӖН 1-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Декабрӗн 1-мӗшӗнче пирӗн çарсем Чехословакире ОНДАВА шывӗ урлӑ каçнӑ та, тӑшманпа çапӑçса, ОНДАВА шывӗн хӗвеланӑç хӗррипе ТРЕБИШОВ хулипе узловой чугун çул станцине туртса илнӗ, çавӑн пекех тата БЕНКОВЦЕ, ГЕНЦОВЦЕ, КОЛЧОВ ДЛУГЕ, ТУЩИЦЕ, ГОРОВЦЕ, ВОЙЧИЦЕ, ХАРДИШТЕ, УПОР, БАРАНЧ, ГАРАНЬ, УЙЛАК, ЯСТРЕБЕ ялӗсене тата УПОР чугун çул станцине йышӑннӑ.

Кӑçалхи ноябрӗн 23-мӗшӗпе 30-мӗшӗ хушшинче пынӑ çапӑçусенче пирӗн çарсем Чехословакире нимӗçсемпе венгерсен 3.000 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

Венгрире пирӗн çарсем ПЕЧ хулинчен çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре тата çурçӗртерехре çав-çавах наступлени туса пынӑ, тӑшманпа çапӑçса, халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — МАЙОШ, ИЗМЕНЬ, РАЦ-КОЗАР, МАГОЧ, ЧИКОШ-ТЕТЕШ, ШАШД, МАДЬЯР ХЕР, ТЕЛЕНД, МАЧФА, АБАЛИГЭТ ятлӑ пысӑк ялсем тата САСВАР, МОГАЧ чугун çул станцийӗсем.

ДРАВА шывӗнчен çурçӗртерехре ДУНАЙ шывӗ урлӑ каçассишӗн тата тӑшманӑн ДУНАЙ шывӗн хӗвеланӑç хӗррипчи оборонине татассишӗн çапӑçма пуçланӑранпа ноябрӗн 30-мӗшне çитиччен пирӗн çарсем нимӗçсемпе венгерсен 5.150 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса çӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн çапӑçнӑ.

☆ ☆ ☆

Чехословакире пирӗн çарсем, наступленине вӑйлатса пырса, Ондава шывӗ çине тухнӑ. Нимӗçсем ку юханшыв вӗсене хытӑ пулӑшӗ тесе шанса тӑнӑ. Вӗсем Ондава шывӗн хӗвеланӑç хӗрринче оборона укреплениийӗсем нумай туса тултарнӑ, вӗсенче хӗçпӑшал питӗ нумай вырӑнаçтарнӑ. Гитлеровецсем, лайӑх позицисемпе усӑ курса, совет чаçӗсен наступленине çав Ондава шывӗ çинче чарса лартма шутланӑ. Гуменне хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн пехотинецсем, алӑ айӗнчи япаласемпе усӑ курса, Ондава шывӗ урлӑ каçса кайнӑ та çав шывӑн хӗвеланӑç хӗрринче çирӗпленсе ларнӑ. Нимӗçсем, пирӗн подразделенисене шыв урлӑ каялла хӑваласа яма хӑтланса, çапӑçӑва хӑйсен резервӗсене кӗртсе янӑ, хӑйсен кӳршӗри участокӗсене вӑйсӑрлатса хӑварнӑ. Çавӑнпа усӑ курса, совет саперӗсем пирӗн пехота тытса илнӗ плацдарма çурçӗртерехре хӑвӑрт понтон кӗперӗ хывнӑ. Автоматчик-гвардеецсем çав кӗпер урлӑ хамӑр пехотӑна пулӑшма ыткӑннӑ, хаяр çапӑçура тӑшман хирӗç тӑнине çӗмӗрсе тӑкнӑ. Пирӗн Михальовце хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре кӗрешекен çарсем те çавӑн пекех Ондава шывӗ урлӑ каçса кайнӑ та, çитӗнӗве вӑйлатса пырса, Требишов хулипе узловой чугун çул станцине турса илнӗ. Çапӑçу хирӗнче тӑшманӑн темиçе çӗр вилли выртса юлнӑ. Трофейсем тытса илнӗ. Вӑл шутра—паровозсемпе вагонсем нумай тата çар пурлӑхӗн темиçе склачӗ пур.

* * *

Венгрире, Печ хулинчен çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре тата çурçӗртерехре, пирӗн çарсем çаплах наступлени туса пынӑ. Тӑшман тӗреклетнӗ пунктсенче тытӑнса тӑма хӑтланнӑ, анчах та тытӑнса тӑма пултарайман. Совет боецӗсем гитлеровецсене йывӑр çухатусем кӳреççӗ, тӑшманӑн ирӗксӗрех пӗр позици хыççӑн теприне хӑварса каялла чакма лекет. Пӗр соединени чаçӗсем, çав тери хӑвӑрт атакӑласа, çулсен узелӗ тата вӑйлӑ çирӗплетнӗ пункчӗ пулса тӑракан Шашд ялне туртса илнӗ. Наступленине вӑйлатса пырса, пирӗн чаçсем нимӗçсене Домбовар хулинчен 3 километр кӑнтӑртарахра ларакан Чикош-Тетеш ялӗнчен хӑваласа кӑларнӑ. Кун каçиччен тӑшманӑн, пӗр вилнисене кӑна шута илсен те, 1.500 салтакпа офицер таран пӗтнӗ. Нимӗçсенчен 29 тупӑ, ултӑ кӗпçеллӗ 8 миномет тата ытти трофейсем те нумай тытса илнӗ.

Совет боецӗсем çулсем пӑсӑлса кайнӑ вӑхӑтри йывӑр условисенче кӗрешеççӗ, хӑюлӑхпа геройлӑх кӑтартаççӗ. Гварди сержанчӗ Рубин тӑшман траншейине пуринчен те маларах вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та нимӗç салтакӗсен ушкӑнне пӗтерсе тӑкнӑ. Гварди сержанчӗ Кулибаба штыкпа чиксе, прикладпа çапса тата пӑшалпа персе 8 гитлеровеца вӗлернӗ. Дудников рядовой 6 нимӗçе вӗлернӗ, виççӗшне тыткӑна илнӗ. Маляренкӑпа Ульянов рядовойсем 12 нимӗçе тыткӑна илнӗ. Гварди рядовойӗсем Пилипчукпа Солобой нимӗçсен пулемет расчетне вӗлерсе пӗтернӗ те туртса илнӗ пулеметпа тӑшмана пеме пуçланӑ, гитлеровецсене пысӑк çухату кӳнӗ.

* * *

Хӗвелтухӑç Пруссире çӗрле пирӗн разведка ушкӑнӗ тӑшман тӑракан вырӑна кӗрсе кайнӑ. Разведчиксем Шрубиновпа Карипанов юлташсем нимӗç пулеметчикне тыткӑна илнӗ те хӑйсен чаçне тавӑрнма тухнӑ. Гитлеровецсем çак разведчиксене курнӑ та вӗсен çулне пӳлсе лартма хӑтланнӑ. Пирӗн боецсем, хӑйсен юлташӗсем персе хӳтӗлесе тӑнипе усӑ курса, хӑйсен чаçне тӗрӗс-тӗкӗлех тавӑрнӑ, тыткӑна илнӗ нимӗç пулеметчикне те хӑйсемпе пӗрле илсе çитернӗ.

Рядовой Копылов снайпер пӗр уйӑх хушшинче 21 нимӗç салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Таранов снайпер çав вӑхӑт хушшинчех 17 гитлеровеца вӗлернӗ.

* * *

Пирӗн тинӗс летчикӗсем Çурçӗр Норвеги çыранӗсем патӗнче нимӗçсен 5 пин тонна таякан транспортне атакӑласа шыва путарнӑ.

* * *

Нимӗçсен 304-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 573-мӗш полкӑн 2-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ ефрейтор Вернер Госсель çапла каласа кӑтартнӑ: «Вӑрçӑ Германи çӗрне кӗрсе кайнӑранпа полкри салтаксен шухӑш-кӑмӑлӗсем пӑсӑлса кайрӗç. Хӗвелтухӑç Пруссире, Силезире, Рейн облаçӗнче тата Вестфалире пурӑннӑ салтаксем вырӑссен çарӗсем тата Англипе Америка çарӗсем вӗсен килӗсене çитесси миçе километр юлнине шутлаççӗ. Халӗ ӗнтӗ ку вӑрçӑра Германи аяла пулнине пурте тенӗ пекех ӑнланса илчӗç. Салтаксем вырӑссен наступленине хӑраса кӗтсе тӑраççӗ. Пурте вырӑссем наступлени пуçласа ярасси çинчен калаççӗ. Салтаксем нумайӗшӗ вырӑс танкӗсенчен питӗ хӑраççӗ, мотор сассине илтсенех, тревога пуçланса каять. Салтаксем, хӑраса ӳксе, пӗр-пӗрне çапла калаççӗ: «Вырӑссем наступлени пуçласа ячӗç», теççӗ.

Нимӗçсен 644-мӗш пехотнӑй батальонӗнчен тыткӑна лекнӗ штабс-фельдфебель Герберт Шульц çапла каласа кӑтартнӑ: «Ӗнтӗ вӑрçӑ хӗвеланӑçӗнче те хӗвелтухӑçӗнче те Германи çӗрӗ çинче пырать. Халӗ нимӗç салтакӗсем Германи çарӗсен çӗнтерӗвӗсем çинчен калаçмаççӗ. Хӗрлӗ Çарпа союзниксен çарӗсене пӗтӗм Германие оккупацилесе илме мӗн чухлӗ вӑхӑт кирлӗ пулма пултарасси çинчен калаççӗ».

«Кнебель» ятлӑ çапӑçу группин 1-мӗш батальонӗнчи 3-мӗш ротӑран тыткӑна лекнӗ унтер-офицер Артур Бирнат çапла каласа кӑтартнӑ: «Германие ӗнтӗ пур енчен те çавӑрса илчӗç. Германи пӗр шанчӑксӑр лару-тӑрӑва кӗрсе ӳкрӗ. Эпир, нимӗçсем, ку вӑрçӑра аяла пултӑмӑр. Вӑрçӑ тӑсӑлса пыни Германие тата йывӑртарах ответ тыттарассине кӑна пӗлтерет».

Латвири хресченсем çӗр илеççӗ

РИГА, декабрӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Нимӗçсем Латвири хресченсенчен тытса илсе баронсене панӑ çӗре халь хресченсене каялла тавӑрса параççӗ. 25.700 хуçалӑх çӗр илнӗ ӗнтӗ. Вырӑнти землеустроительсене пулӑшма Мускавран специалистсен пысӑк ушкӑнӗ килет.

Нимӗçсен оккупацийӗнчен ытларах сиен курнӑ хресченсене государство пулӑшу парать. Латви ССР-ӗн Наркомземӗ 15.000 ӗне илет; çав ӗнесене вӑл сӑвакан выльӑхсӑр тӑрса юлнӑ хресченсене çӑмӑл условисемпе парать.

СОЮЗЛА ВИÇӖ ДЕРЖАВАН—СОВЕТ СОЮЗӖН, АМЕРИКАРИ ПӖРЛЕШӲЛЛӖ ШТАТСЕН ТАТА ВЕЛИКОБРИТАНИН — РУКОВОДИТЕЛӖСЕН ТЕГЕРАНРИ КОНФЕРЕНЦИЙӖ ПУЛСА ИРТНӖРЕНПЕ ÇУЛТАЛӐК ÇИТРӖ.

Сулахайри ӳкерчӗк çинче: И. В. Сталин юлташ, Ф. Д. Рузвельт господин, У. Черчилль господин.

Сылтӑмри ӳкерчӗк çинче: лараççӗ — И. В. Сталин юлташ, Ф. Д. Рузвельт господин, У. Черчилль господин; тӑраççӗ—Г. Гопкинс господин, В. М. Молотов юлташ, А. Гарриман господин, С. Черчилль госпожа, А. Иден господин.

Н. ВЛАСИК фотоӳкерчӗкӗ.

Шупашкар хулинчи интеллигенцин пухӑвӗ

Сталин юлташӑн Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци 27 çул тултарни çинчен тунӑ доклачӗпе приказӗ ячӗпе ноябрӗн 30-мӗшӗнче Советсен çуртӗн пысӑк залӗнче Шупашкар хулинчи интеллигентсен пухӑвӗ пулса иртнӗ.

Зала халӑх туллиех пуханнӑ. Пухӑва пынисем хушшинче врачсем, артистсем, инженерсем, техниксем, ялхуçалӑх институчӗн профессорӗсемпе преподавателӗсем, учительсем, писательсем, художниксем тата служащисем нумай.

Пуху президиумне ВКП(б) Обкомӗн секретарӗсене Чарыков тата Ахазов юлташсене, ВЛКСМ Обкомӗн секретарьне Михайлов юлташа, Чӑваш АССР Çутӗç Халӑх Комиссарне Макаров юлташа, Сывлӑх Халӑх Комиссарне Лихачев юлташа, ВКП(б) хула комитечӗн секретарӗсене Романова, Ислюков, Ардаматский юлташсене, пӗр заводри инженера Эдельштейн юлташа, РСФСР-ӑн тава тивӗçлӗ артистне тата Чӑваш АССР-ӗн халӑх артистне Алексеев юлташа, писателе Агаков юлташа, профессора Пельцих юлташа, врача Гутман юлташа тата ыттисене те суйлаççӗ.

Тӑвӑллӑн алӑ çупса, хисеплӗ президиума Сталин юлташа тата ВКП(б) Центральный Комитечӗн Политбюро членӗсене суйлаççӗ.

Доклад тума Обком секретарьне Ахазов юлташа сӑмах параççӗ.

— Пирӗн пӗтӗм çӗршыв, — тет докладчик, — халӗ пирӗн çулпуç, полководец Сталин юлташ Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци 27 çул тултарни çинчен тунӑ историллӗ докладпа хавасланса пурӑнать. Пирӗн аслӑ çӗршывӑн пур кӗтесӗсенче те совет çыннисем Сталин юлташӑн çак сӑмахӗсене калаççӗ: «Паянтан пуçласа яланлӑхах пирӗн çӗршыва гитлерла ирӗсӗрсенчен тасатнӑ».

Ахазов юлташ совет халӑхӗн фронтра тата тылра тунӑ аслӑ çӗнтерӗвӗсем çинчен тата çав çӗнтерӳсене Совет Союзӗнчи халӑхсен аслӑ çулпуçӗ Сталин юлташ ертсе пынипе тунӑ çинчен калать.

Сталин юлташ совет халӑхӗн ӗçне пысӑка хурса хаклать. Пирӗн республикӑри ӗç çыннисем те тӑшмана çӗнтерес ӗçе хамӑр çӗршыври мӗнпур халӑхсемпе пӗрле пысӑк вӑй хурса ӗçлени çинчен савӑнса калама пултараççӗ. Пирӗн заводсемпе фабрикӑсем фронта кирлӗ продукцие вӑхӑтра туса парса тӑнӑ. Пирӗн республикӑри ялхуçалӑхӗ государствӑна тырӑ тата промышленноçа чӗртаварсем памалли плана кашни çулах иртерсе тултарать. Пирӗн земляксем фронтра хӑйсен паттӑрлӑхне кӑтартаççӗ. Отечественнӑй вӑрçӑ фрончӗсенче паттӑррӑн çапӑçнӑшӑн пирӗн земляксене 30 çынна ытла Совет Союзӗн Геройӗ ятне панӑ, 20 пин çынна СССР орденӗсемпе медалӗсене парса наградӑланӑ.

— Пирӗн республикӑри тата республика столицинчи интеллигенци,—тет докладчик, —хӑйӗн ӗçӗсемпе мухтанма пултарать. Вӑл та тӑшмана пӗтерес ӗçе сахал мар вӑй-хӑват панӑ. Вӑрçӑ çулӗсенче пирӗн техникӑлла интеллигенцин йышӗ чылай ӳсрӗ. Совет интеллигенцийӗн ретне темиçе çӗр инженерпа техник хутшӑнчӗç. Вӗсем пулӑшнипе пирӗн республикӑра электротехника оборудованийӗ тӑвакан, пир-авӑр тӗртекен, чӑлха çыхакан, табак тӑвакан тата ытти тӗрлӗ продукцисем туса кӑларакан производствӑсене организациленӗ. Шупашкар хулинчи промышленность вӑрçӑ çулӗсенче продукци туса кӑларассине 9 хут ӳстернӗ. Хулари предприятисенчи инженерсемпе техниксем вӑрçӑ çулӗсенче темиçе рационализациллӗ сӗнӳ панӑ. Вӗсене ӗçе кӗртни пӗр миллион тенкӗ перекетлеме май панӑ.

Вӑрçӑ çулӗсенче ялхуçалӑх институтӗнчи профессорсемпе преподавательсем, больницӑсемпе госпитальсенчи врачсем, искусство работникӗсем, писательсем пысӑк ӗç турӗç. Анчах та пирӗн тунӑ ӗçсемпе лӑпланса лармалла мар. Совет интеллигенцийӗ умӗнче фронт валли продукци туса кӑларассине ӳстерес, халӑха медицина тӗлӗшӗнчен пулӑшас, халӑха вӗрентсе çутта кӑларас ӗçе тата наукӑпа тӗпчев ӗçне вӑйлатас тӗлӗшпе питех те пысӑк задачӑсем тӑраççӗ. Çак ӗçсене пурнӑçа кӗртнӗ çӗрте Сталин юлташӑн доклачӗ ӗç программи пулса тӑрать. Çавӑнпа та кашни интеллигентӑн Сталин юлташӑн доклачӗпе приказне тӗплӗн вӗренмелле, ӑна пурнӑçа кӗртессишӗн куллен тимлӗн ӗçлемелле.

Ахазов юлташ хыççӑн пӗр заводри главнӑй конструктор Эдельштейн юлташ сӑмах илет.

— Пирӗн заводри интеллигенци,—тет вӑл, — вӑрçӑ çулӗсенче завода çак çӗнӗ вырӑнта хута ярас, çӗнӗ йышши продукцисем туса кӑларас тата квалификациллӗ кадрсем хатӗрлес енӗпе пысӑк ӗçсем турӗ. Пирӗн заводри рабочисемпе служащисем тата интеллигентсем Сталин юлташӑн докладне пысӑк çӗкленӳпе кӗтсе илчӗç. Çулпуç сӑмахне ответлесе, завод коллективӗ çулталӑкри производство планне срокчен тултарма, продукци пахалӑхне лайӑхлатма пулчӗ. Эпир Сталин юлташ лартнӑ историллӗ задачӑсене пурнӑçа кӗртессишӗн вӑя шеллемесӗр кӗрешетпӗр.

— Сталин юлташ совет интеллигенцин ӗçне пысӑка хурса хаклани,—тет хӑйӗн сӑмахӗнче Чӑваш АССР-ӗн тава тивӗçлӗ артисчӗ Праудин юлташ, — пире çӗнӗ вӑй-хӑват парать. Совет искусствин кашни работникӗ Сталин юлташӑн докладне творчествӑллӑ çӗнӗ япаласем панипе ответлеме тивӗçлӗ.

Медицина наукисен кандидачӗ Гутман юлташ совет врачӗсем тата медицина учрежденийӗсенчи ытти работниксем фронтсенче аманнӑ боецсене сыватас тата совет ӗççыннийӗсене медицина тӗлӗшӗнчен пулӑшас енӗпе тунӑ ӗçсем çинчен каласа парать тата йывӑр çын пулнӑ хӗрарӑмсене, нумай ачаллӑ тата тӑлӑх хӗрарӑмсене государство енчен пулӑшу парасси çинчен калакан указӑн историллӗ пӗлтерӗшӗ çинчен калать.

Писатель-орденоносец Агаков юлташ хӑйӗн сӑмахӗнче чӑваш писателӗсен вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи ӗçӗсем çинчен каласа парать.

Пухура пӗр заводри инженер Вессан, Чӑваш республикин тава тивӗçлӗ учительници Данилова, заводри шкул директорӗ Раткович, РСФСР-ӑн тава тивӗçлӗ артисчӗ тата Чӑваш АССР-ӗн халӑх артисчӗ Алексеев юлташсем тухса каларӗç.

Пуху пысӑк çӗкленӳпе аслӑ Сталин юлташ патне саламлӑ çыру яма йышӑнчӗ.

* * *

Хулари интеллигенцин пухӑвӗ Чӑваш АССР-ӗнчи интеллигентсем патне чӗнсе каланине йышӑнчӗ. Столицӑри интеллигенци Чӑваш республикинчи интеллигентсене çак ӗçсене пурнӑçа кӗртессишӗн кӗрешме чӗнет:

1. Ӗç меслечӗсене тата производствӑна организацилессине лайӑхлатса пырас тӗлӗшпе пӗрмаях тимлӗн ӗçлемелле, рационализаципе изобретательство ӗçне татах та анлӑн сарса ямалла; çӗнӗ кадрсене вӗрентес, производствӑра малта пыракансен опытне сарас ӗçе лайӑхлатмалла, хамӑрӑн экономикӑллӑ тата вӑрçӑ хӑватне вӑйлатма техникӑна пӗрмаях малалла аталантарса пымалла.

2. Чӑваш республикин ялхуçалӑхӗпе промышленноçне, историйӗпе культурине аталантарас ыйтусене наука енчен тӗпчесе пӗлес ӗçе, çавӑн пекех тата ӗççыннисем хушшинче наука пӗлӗвне сарас ӗçе активлӑн хутшӑнса ӗçлемелле.

3. Искусство учрежденийӗсен ӗçне идейӑпа художество тӗлӗшӗнчен тата та çӳлерех çӗклемелле, литературӑпа искусствӑра пирӗн халӑхӑн лайӑх туйӑмӗсене кӑтартса памалла, çапла вара вӗсен сӑнарӗсене пӗтӗм ӗççыннисем, уйрӑмӑнах çамрӑксем патне çитермелле.

4. Халӑха чирсенчен сыватас ӗçе татӑклӑнах лайӑхлатмалла, чиртен сыватакан учрежденисен ӗçӗнчи культурӑлӑха çӗклемелле, хуласемпе ялсене сикекен чирсенчен сыхламалла, профилактикӑпа санитари ӗçне лайӑхлатмалла.

5. Пурне те вӗрентмелли государство законне чыслӑн пурнӑçа кӗртсе пымалла, шкулсенче вӗренӳпе воспитани ӗçне çӳлӗ пусӑма çӗклемелле, вӗренекенсемпе студентсене тарӑн та çирӗп пӗлӳ памалла.

6. Халӑха çутта кӑларас ӗçе, клубсен ӗçне, ӗççыннисен культурӑллӑ канӑвне йӗркелес ӗçе, колхозниксене агрономи тӗлӗшӗнчен вӗрентес ӗçе тата культура çурчӗсемпе вулав çурчӗсем иртерекен ӗçсене активлӑн хутшӑнса ӗçлемелле.

Эпир Сталин юлташӑн докладне тӗплӗн вӗренетпӗр, — тенӗ чӗнсе каланинче, — Сталин юлташ аслӑн кӑтартса панисене ӗççыннисем патне çитерес ӗçе активлӑн хутшӑнатпӑр. Совет интеллигенцийӗн вӑйӗ — вӑл идея тӗлӗшӗнчен малта тӑнинче, вӑл общество мӗнле аталанса пынине, Маркспа Ленинӑн мировоззренине пӗлнинче пулать. Марксизмпа ленинизма вӗренсе пырса, эпир идеологи ӗçне активлӑн хутшӑнатпӑр, большевикла партин мировоззренине сарас тата хальхи вӑхӑтри политика ыйтӑвӗсене халӑха ӑнлантарса парас ӗçе активлӑн хутшӑнатпӑр.

Советлӑ Чӑваш республики 25 çул тултарасси инçе юлмарӗ ӗнтӗ. Интеллигентсен тивӗçӗ — çав датӑна наукӑпа техникӑра, литературӑпа искусствӑра çӗнӗ çитӗнӳсем тунипе, халӑха çутта кӑларас тата халӑх сывлӑхне сыхлас ӗçре çӗнӗ çитӗнӳсем тунипе кӗтсе илесси пулать. Эпир Чӑваш республикинчи интеллигентсене çав чаплӑ куна çитӗнӳсемпе кӗтсе илессишӗн социализмлӑ ӑмӑртӑва тухма чӗнетпӗр.

Сталин юлташ Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци 27 çул тултарни çинчен тунӑ доклад тата приказ Хӗрлӗ Çарпа совет халӑхӗн ӗç программи пулса тӑрать.

СССР Совнаркомӗнче

Вӑрçынисем ыйтнине пурнӑçа кӗртес тесе, ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ СССР Конституци кунне—декабрӗн 5-мӗшне—уявламалла мар тунӑ, кӑçал çав куна ӗç кунӗ тесе шутлама йышӑннӑ.

Ӳкерчĕк çинче: Красноармейски МТС-ри хĕрарăмсен 8-мĕш бригадин бригадирĕ Ульяна Николаевна юлташ. Унăн бригади тăватă тракторпа ĕçлет, 3 трактор юсамалла пулнă. Вĕсем 3 трактора тата вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене ноябрĕн 25-мĕшĕнче тĕплĕ юсаса пĕтернĕ.

У. Н. Николаева юлташа стахановла ĕçленĕшĕн Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Хисеплĕ грамотине парса наградăланă.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

ЧУГУН ÇУЛ ВАЛЛИ ВУТА ХАТĔРЛЕСЕ ТУРТТАРМАЛЛИ IV-мĕш КВАРТАЛТИ ПЛАНА 1944 ÇУЛХИ ДЕКАБРĔН 1-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем	Плана туртарнă (процентпа)		Мĕнле вырăн йышăнать	
	Турттарас çине	Хатĕрлесе	Турттарас çине	Хатĕрлесе
Куславкка	90.0	102.0	1	5
Йĕпреç	89.0	73.6	2	5
Октябрьски	79.8	101.0	3	2
Шăхасан	72.4	71.2	4	9
Шупашкар	72.0	82.4	5	4
Первомайски	69.3	56.8	6	15
Чурачăк	66.0	59.4	7	14
Вăрнар	63.2	45.8	8	19
Сĕнтĕрвăрри	62.0	72.2	9	8
Комсомольски	59.7	58.7	10	16
Красноармейски	58.1	71.2	11	6
Вăрмар	55.8	35.6	12	24
Патăрьел	55.3	82.6	13	3
Хĕрлĕ Чутай	53.4	65.8	14	11
Калинино	51.4	62.0	15	12
Елчĕк	49.6	53.8	16	18
Канаш	47.7	33.7	17	25
Советски	44.8	44.1	18	21
Етĕрне	44.1	45.5	19	20
Муркаш	44.0	38.1	20	23
Элĕк	42.5	29.2	21	27
Чкаловски	39.3	70.5	22	10
Çĕрпӳ	39.0	60.5	23	13
Тăвай	38.0	40.1	24	22
Çĕмĕрле	37.2	72.6	25	7
Кувакино	34.5	56.5	26	17
Сĕнтĕр	31.6	28.5	27	28
Ишлей	31.3	31.3	28	26

Çĕршер пăт çĕрулми валеçрĕмĕр

ОКТЯБРЬСКОЕ. Кăçалхи çул Нараттăкки ялсоветĕнчи колхозсем вăйлă тухăçлă çĕрулми туса илчĕç. Вăрлăхпа фураж фончĕсене çителĕклех хывнă хыççăн ĕçкунĕ пуçне «Культура» колхоз — 5,5 килограмм, «Опыт» колхоз—4,0 килограмм, «Молния» колхоз—1,5 килограмм, «Красное Сормово» колхоз—1,5 килограмм валеçсе пачĕç. «Культура» колхозри фронтовик арăмĕ Анисия Николаева — 94 пăт, Отечественнăй вăрçă инвалиĕ П. Макаев —92 пăт, 72 çулхи старик, фронтовик ашшĕ В. Фролов—96 пăт çĕрулми илчĕç. Хăшпĕр çемьесем темиçе çĕршер пăт илме пултарчĕç. Сăмахран, Владимир Долгов çемьи—405 пăт, Юлия Николаева çемьи—336 пăт, Владимир Железков çемьи—332 пăт çĕрулми илчĕç.

И. АНДРЕЕВ.

Кок-сагыз мастерĕсем

Пăрачкав районĕнчи «Красный Порденер» колхозăн çутă та таса клубне кĕрсенех, кок-сагыз тымарĕсен тухăçне кăтартакан диаграмма куçа курăнать. Сцена çинче «Каучук мастерĕсене хисеп» тесе çырнине вуласа илетĕн те ку колхозра кок-сагыз мастерĕсем пурăннине пĕлетĕн.

— Колхоз председателĕ Максим Петров районри çĕр пайĕнчен килнĕ хута вуласа тухнă хыççăн [illegible] Унтан вăл пĕр утăм малалла ярса пуснă та счетоводран çапла ыйтнă:

— Мĕн вăл кок-сагыз текен япала? Ăна пирĕн ултă гектар акмалла тесе çырнă кунта.

— Хаçатсем çинче вуланăччĕ те, çимĕçне хам куçпа курман, — ответленĕ счетовод.

Тепĕр ик-виçĕ кунтан колхоза агроном килсе çитнĕ. [illegible]

[illegible]

Стратификаци тунă çĕрте пуринчен ытларах Раиса Петрова ертсе пынипе Анисия Егорова, Нина Трофимова, Ольга Трофимова юлташсем тăрăшса ĕçленĕ. Бригадăри ытти колхозницăсем çав вăхăтра пăчкă кĕрпи, лайăх çĕрнĕ тислĕк пуçтарса хатĕрленĕ. Çав тислĕкпе пăчкă кĕрпи çине ĕнен чĕрĕ тислĕкне хутăштарнă, лайăх çăрса пăтраштарнă, калча тума питомникре 5 йăран туса хатĕрленĕ. Майăн 14-мĕшĕнче кок-сагыз вăрлăхне йăрансем çине акса, çиелтен вăрманти лайăх çĕрнĕ хура тăпрана сапса витĕнтернĕ.

Анчах бригадăн кунпах ĕç пĕтмен-ха. Вĕсем питомникре шăтса тухнă кок-сагыз калчине куçарса лартма уйри участока хатĕрлеме тытăннă. Ултă гектар çĕре тепĕр хут культиваци туса кăпкалатнă, лайăх сӳреленĕ.

Кок-сагыза кăçалхи çул çĕнĕ йĕркепе, академик Т. Лысенко кăтартнă тăрăх, калча туса шăтăксем çине куçарса лартнă. Каучук ĕрчетекен бригадăри кашни çынна 0,23-шер гектар участок çирĕплетсе панă. Колхозницăсем, хăйсен участокĕнчен ытларах кок-сагыз тымарĕ илес тесе, пĕр-пĕринпе ăмăртăва тухнă. Бригадăри колхозницăсем Чăваш республикинчи колхозсене кашни гектартан 20 центнертан кая мар кок-сагыз тымарĕ туса илессишĕн кĕрешме ăмăртăва чĕннĕ. Илнĕ обязательствăна пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçленĕ. Йăрансем çинчи кок-сагыз калчисене шăтăксем çине куçарса лартиччен куна икшер хут тислĕк шывĕпе шăварнă. Йăранра 5 кун ларнă хыççăн, йăрансем çинчи кок-сагыз шăтнă тăпрана татăкăн татăкăн касса, уя, ятарласа хатĕрленĕ участоксем çине, 8 кун хушшинче куçарса пĕтернĕ. Ĕç уя куçнă. Кунта пушшех те йывăртарах, кăткăсрах ĕçсем пуçланса кайнă.

Чăнах та, каучук ӳстересси — çăмăл ĕç мар. Ăна ачашласа пăхас пулать. Бригадăри колхозницăсем кок-сагыз тĕпĕсене пĕрмаях кăпкалатса тăнă. Мĕн пурĕ плантацие 5 хут çумласа тасатнă. 5 хут кăпкалатнă. питомникрен участок çине куçарса лартсан виçĕ хутчен культиваци тунă, унтан каллех тепĕр хут алă вĕççĕн кăпкалатнă.

Çумăр çуса иртнĕ хыççăн, кайăк-кĕшĕк тислĕкне лайăх вĕтетсе, аласа, кок-сагыз тымарне икĕ хутчен апатлантарнă. Кусемсĕр пуçне ытти мероприятисене те туса пынă. Кайăк-кĕшĕк тислĕкĕн шывне виçĕ витре илсе 10 витре шывпа хутшăнтарса, пĕр эрне хушши йӳçĕтнĕ. Çавăн пек шывпа 6 гектар çинчи кок-сагыза пĕр хут апатлантарнă. Çак ĕçе бригадăри пур звеносем те туса ирттернĕ.

Вăйлă тухăçлă каучук ӳстерес тесе, пĕрремĕш звенори 66 çула çитнĕ Евгения Егорова хăйне панă 0.23 гектар çинче ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕ.

Егорова хăйĕн участокĕнчен 974 килограмм кок-сагыз тымарĕ туса илнĕ. Унăн ĕçне хакланă. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна малтанлăха виçĕ мăшăр калуш, пĕр мăшăр ботинка панă. Пĕрремĕш звенори 63 çула çитнĕ Дария Ильина та начар ĕçлемен. Вăл та 0.23 гектартан 836 килограмм кок-сагыз тымарĕ туса илнĕ.

Шкулта вĕренекен Рима Федорова та хăй валли участок уйăрса илнĕ те пичĕ çине тар кăларсах ĕçленĕ. Çамрăк пулин те ваттисенчен кая юлман. Тăрăшни сая кайман, вăл государствăна 0.23 гектартан 480 килограмм кок-сагыз тымарĕ туса панă.

Ăмăртăвăн хăвачĕ пысăк. Звеносем хавасланса ĕçленин результачĕсем куç умĕнче. Пĕрремĕш звено кок-сагыза акма та лайăх хатĕрленнĕ, унăн тупăшĕ те ытти звеносенниннчен ытларах. Пĕрремĕш звенона (звеньевойĕ Анисия Егорова) 1.57 гектар çирĕплетсе панă. Çак лаптăкран пĕтĕмпе 3.389 килограмм кок-сагыз тымарĕ тухнă. Иккĕмĕш звено (звеньевойĕ Ольга Трофимова) 1,82 гектартан 3991 килограмм, виççĕмĕш звено (звеньевойĕ Нина Трофимова) 1,61 гектартан 3331 килограмм кок-сагыз тымарĕ туса илнĕ.

Çапла вара «Красный Порденер» колхоз колхозникĕсем хăйсем илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçланă. Кашни гектартан 20,22 центнер, уйрăм участоксенчен 26 центнер кок-сагыз тымарĕ туса илнĕ.

— Малтанах ĕç ытла та йывăр пек туйăнатчĕ. шутсăр хăраттăм, тухăç пулмасть пуль теттĕмччĕ. Халь хам ĕçпе хам та савăнатăп, — тет кок-сагыз бригадин бригадирĕ Петрова юлташ.

Пĕрремĕш çулхи кок-сагыз тымарне нумай туса илнĕшĕн колхоза 30.300 тенкĕлĕх промышленность таварĕсем панă. Калуш кăна 220 мăшăр панă. Колхозра 86 хуçалăх. Вăтамран кашни хуçалăха икĕ мăшăр калуш тивет.

Нумаях пулмасть, колхоз клубĕнче колхозниксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура Сталин юлташăн докладне колхозниксене ăнлантарса пачĕç. Колхозниксем, çулпуç доклачĕ çине ответлесе, çитес çул гектартан 30 центнертан кая мар кок-сагыз тымарĕ туса илме обязательство илчĕç. Кок-сагыз акмалли вырăна 740 лав тислĕк тăкнă, кĕрхи çĕртме туса хăварнă. Кĕркунне 100 тăваткăл метр çине калча акнă.

С. ШАДИН.

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. («Чăваш Коммуни» корр.).

АГРОТЕХНИКĂНА ВĔРЕНЕССĔ

Вăрмар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем çуракине хатĕрленме тытăнчĕç. Кашни колхозрах халĕ вăрлăх валли уйăрнă тырра сортлас ĕç хĕрӳллĕн пырать. Вăрлăх фондне пирĕн районри колхозсем çителĕклĕ уйăрчĕç. «Тукас», «Победитель», «Коминтерн» колхозсенче кăна пăрça вăрлăхĕ çителĕклĕ хывман.

Вăрлăх тасатас ĕç районра ăнăçлă пырать. Паянхи кун тĕлне 31 процента яхăн сортласа хунă. «Свобода» колхоз 445 центнер, «Красный Мурат» колхоз 309 центнер вăрлăха пĕтĕмпех сортласа пĕтерне. Çавăн пекех Кивĕ Мăратри Молотов ячĕпе тăракан, «Заря», «Большевик», «Красная Кубня», «Дружба» колхозсем те вăрлăхлăх тырра сортласа пĕтерчĕç. Колхозсенче тырă сортлас ĕçе хăвăртлатас шутпа, эпир районра тырă сортлама куçса çӳрекен икĕ пункт организацилерĕмĕр. Кашни пунктĕнчех 2-шер «триер», «триумф», «клеймон» сортировкăсем пур, пĕр пунктĕнче вĕсемсĕр пуçне «змейка» машина та ĕçлет. Çак пунктсенче кунĕнçĕрĕн тырă тасатаççĕ. Пĕр колхозăнне пĕтерсен, тепĕр колхоза куçаççĕ. Çапла майпа вăрлăха çĕнĕ çулччен пĕтĕмпех сортласа пĕтерме шутлатпăр.

Иртнĕ çул курăк вăрлăхĕсем çитменни пире нумай чăрмантарчĕ. Çакна шута илсе, кăçал эпир курăк вăрлăхĕсене кĕркуннеренех хатĕрлеме тытăнтăмăр. Пирĕн халĕ районра 120 центнера яхăн клевер тата ытти курăксен вăрлăхĕсем пур.

Вăрлăхсене сортланипе пĕрлех, колхозсенче агротехникăна вĕренмелли кружоксем те ĕçлеме тытăнчĕç. «Красные Шигали» колхозра агротехника кружокне 35 çын çӳрет. Кружока Биктимиров юлташ ертсе пырать. «Свобода» колхозри агрокружока 40 çын ытла çӳрет. «Заря» колхозра агрокружокра пысăк опытлă бригадирсем тата колхозри стахановецсем калаçусем ирттереççĕ. «Дружба» колхозри агрокружока Тимофеев юлташ ертсе пырать. Кружока колхоз председателĕ Григорьев юлташ куллен пулăшать, час-часах хăй те калаçусем ирттерет.

С. САПАРКИН.

Çуракине халех хатĕрленмелле

КОМСОМОЛЬСКОЕ, декабрĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче халĕ вăрлăх фончĕ хываççĕ. Паянхи кун тĕлне вăрлăх фондне 82 процент хывнă. «Трактор», «Дубовка», Шмидт, Красин ячĕсемпе тăракан колхозсем пур культурăсен вăрлăхне те хывса çитернĕ. Халĕ çак колхозсенче вăрлăхсене аласа тасатаççĕ. «Трактор» колхозра пур вăрлăхсене те аласа тасатнă. Анчах та çавăн пек колхозсем районра нумай мар-ха.

«Самолет», Ворошилов, Молотов, Калинин ячĕсемпе тăракан колхозсенче вăрлăх фондне çак вăхăта çитсе те хывса çитермен. Уйрăмăнах районра тулă, пăрça йышши культурăсен вăрлăхне хывасси çителĕксĕр пырать. Пирĕн районри колхозсен вăрлăхлăх 5850 центнер тулă уйăрмалла, паянхи кун тĕлне пурĕ 4657 центнер уйăрнă. Вăрлăх фондне çак эрне хушшинче хывса çитерме шутлатпăр. Вăрлăхсене сортлас ĕçе халех тытăнма та пур условисем те пур, хăшпĕр колхоз руководителĕсем çаврăнăçусăррине пула кăна ĕç чарăнса тăрать.

Кăçал эпир кашни колхозрах агрокружоксем организацилетпĕр. Вĕсене ертсе пыма участоксенчи агрономсене, зоотехниксене тата колхоз председателĕсене явăçтарма палăртрăмăр. Унсăр пуçне, районра полеводсен эрнелĕх курсне организацилерĕмĕр, вăл ĕçлеме тытăнчĕ. Ферма заведующийĕсемпе старши конюхсен курсне те уçрăмăр.

А. ПОЛЯКОВ,

Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Ют çĕршывсенче

УИНСТОН ЧЕРЧИЛЛЬ 70 ÇУЛ ТУЛТАРНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Премьер-министр Уинстон Черчилль паян 70 çул тултарнă. Çав май Англири хаçатсем юбилярăн государство ĕçĕсем çинчен статьясем пичетлесе кăларнă.

РУЗВЕЛЬТ ПРЕЗИДЕНТАН ЧРЕЗВЫЧАЙНАЙ ПОЛНОМОЧИЙĔСЕН СРОКНЕ ТĂСНИ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, США-ри представительсен палати президентăн вăрçă вăхăтĕнчи чрезвычайнăй полномочийĕсен срокне тата тепĕр çула тăснă. Çапла вара, çакăнпа сенат килĕшсен, президентăн чрезвычайнăй полномочийĕсен срокĕ тăсăлать. Анчах та законопроекта хăйне уйрăм пункт кĕртнĕ. Çав пункт тăрăх, материалсене чи малтан кама валеçсе парас тĕлĕшпе правительствăн кирек хăш учрежденийĕн ĕçĕсене те судсем тепĕр хут пăхса тухма пултараççĕ.

БОНОМИ ИТАЛИН ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ТУМА КИЛĔШМЕН

РИМ, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Паян каçхине 8 сехетре официальнăй йĕркепе пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: король наместникĕ канашлу туса илнĕ хыççăн Бономие йышăннă, ăна çĕнĕ правительство тума сĕннĕ. Бономи король наместникĕ сĕннине йышăнман.

ПОЛЯКСЕН ЭМИГРАЦИРИ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). «П. М.» хаçатăн Лондонри корреспонденчĕ Ку çапла çырать: Польшăн эмиграцири çĕнĕ правительстви, Арцышевский ертсе пыраканскер, «Совет Союзне курайман правительство пек палăрса тăрать», тет.

МАЙДАНЕКРА ТИСКЕР ĔÇСЕМ ТУНĂ ГИТЛЕРОВЕЦСЕНЕ СУДПА АЙĂПЛАНИ

ЛЮБЛИН, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Майданекра хупса усранă çынсене вĕлернĕшĕн тата асаплантарнăшăн айăпланакан çынсенчен — фашистла нимĕç пуçкасаканĕсенчен — ĕнер судра ыйтса пĕтернĕ. Вĕсем гитлеровецсем Майданекри вилĕм лагерĕнче çав тери тискер ĕçсем тунине тепĕр хут лайăх кăтартса панă. Суд ĕнер свидетельсенчен ыйтма пуçланă. Свидетельсем çав айăпланакан çынсем пуçкасакансем тата садистсем пулса тăнине палăртса панă.

Свидетельсем Ольшанский тата Майданекри лагерьте икĕ çула яхăн пурăннă Андрей Станиславский каланă тăрăх, айăпланакан Польман уйрăмах хаяр палач пулнă. Çав преступника, ĕлĕкрех темиçе хутчен те наказани тӳссе ирттернĕскере, Майданека асаплантарма лайăх пĕлекен çын тесе шутласа янă. Свидетельсем пурте каланă тăрăх, лагере хупнă çынсене 2.000 çынна ытла Польман хăй вĕлернĕ. Вăл хĕрарăмсене йышлăн пусмăрланă.

Свидетель Будзень, Майданекра аптекарь пулса ĕçленĕскер, Майданекри нимĕç врачĕ Бланке калаçнине каласа парать. Майданекра, тенĕ çав Бланке, намăса пĕлмесĕр,—çын ирĕксĕрех вилмелле йĕрке туса хунă. Кам хăй вилмен, ăна вĕлернĕ. Çынсене йышлăн вĕлернĕ чухне пĕр харăс темиçе çĕр çынтан пуçласа темиçе пин çынна çитиччен вĕлернĕ.

1941 çулхи хĕлле Майданека Хельмран тыткăна лекнĕ совет çыннисене темиçе çĕр çынна илсе пынă. Çав çынсем хушшинче 2 подполковник, 5 майор, 15 капитан, темиçе вунă лейтенант тата рядовой красноармеецсем нумай пулнă. Эрнерен те сахалтарах вăхăт хушшинче çав çынсене пурне те çакса вĕлернĕ.

Пĕррехинче çав лагерьте пĕр харăс 18:000 çынна вĕлернĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ декабрĕн 1-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Голландире союзниксен çарĕсем Маас районĕнчи «миххе» тасатса пĕтерессишĕн çапăçнă, Нанссумпа Брукхейзен çывăхĕнчи икĕ çуртри тĕреклетнĕ пунктсене туртса илнĕ. Брукхейзен ялне тăшмантан ирĕке кăларнă.

Линних хули районĕнче (Германи) союзниксен чăçĕсем Кослар хулинчен çурçĕртерехре Рур шывĕ çине тухнă. Беек, Линдерн тата Фломсдорф хулисенче çапăçусем пыраççĕ.

Унтан кăнтăртарахра хаяррăн çапăçнă хыççăн союзниксен çарĕсем Ламмерсдорф хулине тытса илнĕ, Инде шывĕнчен хĕвеланăçнерехре Инден хули районне кĕрсе кайнă.

Мерод хулинче çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Вогез тăвĕсем çинче Саверн проходĕнчен çурçĕртерехре тата Гаенау хули таврашĕнче те çитĕнӳсем тунă.

Тăшман Страсбург хулине Рейн шывĕ урлă хаяррăн пенĕ.

Эльзас тӳремĕн çурçĕр пайĕнче, союзниксен çарĕсем тăшман начар хирĕç тăнине çĕнтерсе тăкса, Герстхейм тата Стотцхейм хулисем патне çитнĕ. Вогез тăвĕсен кăнтăр пайĕнче союзниксен çарĕсем сарлака фронтпа наступлени туса пыраççĕ; халĕ союзниксен çарĕсен чăçĕсем Урбис Сен-Амарен хулине пырса кĕресси икĕ миля кăна тăрса юлнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн тĕрлĕ вăрçă объекчĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавраш ĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ декабрĕн 1-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Италире Фаэнца хулинчен хĕвелтухăçнерехре 8-мĕш арми чăçĕсем Ламоне тата Монтоне шывĕсем хушшинчи районра кăштах малалла куçнă. Ку фронтăн ытти участокĕсенче патрульсем кĕрешнĕ. 5-мĕш армири Англи тата Инди чăçĕсем темиçе çуллĕ вырăна туртса илнĕ.

АМЕРИКАНЕЦСЕН 2.200 САМОЛЕЧĔ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра çапла пĕлтернĕ: Американецсен «Вĕçекен крепость» йышши 1.200 бомбардировщикĕ ытла, 1.000 истребитель ытла хӳтĕлесе пынипе, ĕнер Лейпциг районĕнчи синтетически горючи завочĕсене тапăннă. Вертен, Цейц, Мĕрзебург тата Люцкенфор хулисенчи синтетически горючи завочĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбардировщиксем çавăн пекех тата Саарбрюккен хулинчи чугун çул деповне тапăннă.

Хĕвеланăç Германири лару-тăру

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Базель хулинче тухакан «Арбейтер цейтунг» хаçат Германирен Швейцари чикки урлă пынă хыпарсем тăрăх çапла пĕлтерет: Германин шалти лару-тăрăвĕ çивĕчленнĕçемĕн çивĕчленсе пырать, вăл уйрăмах та Анат Рейн, Карлсруэ районĕсенче тата Рур облаçĕнче çивĕчленсе пырать. Транспортра нимĕнле йĕрке те çук пирки предприятисем, уйрăмах та Рейн облаçĕнче, час-часах ĕçлемесĕр лараççĕ. Руртан çĕркĕмрăк вăхăтран вăхăта çеç илсе пынă пирки промышленноçлă районсенчи предприятисем эрнешер ĕçлемесĕр лараççĕ.

Халăха Хĕвеланăç Германирен пĕр йĕркесĕр куçарса кайнă пирки, нумай çемьесем сапаланса пĕтнĕ, çывăх тăванĕсене мĕнле тупмаллине никам та пĕлмест, мĕншĕн тесен почта ĕçлемест. Кельн хулинче пурнăç уйрăмах йывăрланса çитнĕ. Сывлăшран бомбăсем пăрахнă пирки хулана шыв, газ тата электричество парса тăрас ĕç чарăна-чарăна ларать. Çавна пула Кельн хули вилĕ хула пек пулса ларнă.

Германири халăх хушшинче пораженилле шухăш-кăмăлсем ӳссе пыраççĕ. Гестаповецсем çавăн пирки халăха хаяррăн тыткалаççĕ. Çапла, Кельн хулинче пĕр эрне каярах площадьсенче 10 çынна çакса вĕлернĕ, темиçе кун иртсен — тата 11 çынна çакса вĕлернĕ. Вĕсене çак вăрçăра малалла вăрçни Германие нимĕн те парас çукки çинчен калаçнăшăн вĕлернĕ.

ГЕРМАНИ ПРОМЫШЛЕННИКНЕ ПОРАЖЕНИЛЛĔ ШУХĂШ-КĂМĂЛСЕМШĔН АСАПЛАНТАРСА ВĔЛЕРНИ

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). «Гамбургер фремденблат» ятлă фашистла нимĕç хаçачĕ çапла пĕлтерет: Гамбургри суд йышăннă приговор тăрăх, Гамбургри промышленность концернĕн генеральнăй директорне Альберт Вилль доктора асаплантарса вĕлернĕ. Унăн айăпĕ çакă пулнă: вăл «Германи вăрçăра аяла пуласси çинчен уççăнах каланă, Германи валюти çирĕппи пирки тата Германири рабочисем малалла та ĕçлеме хатĕрри пирки иккĕленсе каланă».

ГЕРМАНИН «ФОЛЬКСШТУРМЕНЧЕН» ÇЫНСЕМ ЙЫШЛĂН ТАРАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтонтиднинген» хаçат çапла пĕлтерет: гестапо Берлинра «фольксштурма» мобилизациленĕ 56.000 нимĕçе шырать. Çав çынсем ноябрĕн 25-мĕшĕнче кантура пырса çырăнмалла пулнă, анчах та вĕсенчен пĕри те пыман.

Тĕнчери лару-тăру

Союзлă виçĕ аслă державăн руководителĕсем — СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президенчĕ Ф. Рузвельт тата Великобритани Премьер министрĕ У. Черчилль Тегеранра пĕр-пĕринпе историллĕ тĕл пулса калаçнăранпа çулталăк иртрĕ.

Çак çулталăк Хĕрлĕ Çар татăклă çитĕнӳсем тунипе паллă пулса тăчĕ. Хĕрлĕ Çар гитлеровецсен йыткĕтĕвĕсене темиçе хут та аркатмаллах пыра-пыра çапрĕ, нимĕçсемпе вĕсен союзникĕсен 120 дивизине çапса çĕмĕрсе стройран кăларчĕ, нимĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсене совет çĕрĕ çинчен хăваласа кăларчĕ. Совет çарĕсем Германи çĕрĕ çинче çапăçма пуçларĕç, Польшăна, Чехословакие, Норвегие ирĕке кăларас ĕçе пуçарса ячĕç.

Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕпе пĕрле Хĕрлĕ Çар Белград хулине ирĕке кăларчĕ те нимĕçсене халь Югослави çĕрĕ çинче аркатса пырать. Совет çарĕсем пыра-пыра çапнине пула, гитлерла союз арканса кайрĕ, çав союзран Финлянди, Румыни тата Болгари тухса ӳкрĕç.

Нимĕçсем хĕвеланăçĕнче те калама çук пысăк поражениссем тӳсрĕç. Союзниксен çарĕсем нимĕçсене Францирен, Бельгирен тата Вăтам Италирен хăваласа кăларчĕç. Вĕсем халь Германи çĕрĕ çине кĕрсе кайрĕç, «Зигфрид линине» шăтараççĕ.

«Хĕрлĕ Çар тата Англипе Америка çарĕсем гитлерла Германие пĕрле пыра-пыра çапни вăрçăра союзниксем çĕнтерес сехетне çывăхартрĕ. Гитлерла Германие çавăрса илеççĕ. Фашистла тискер кайăкăн шăтăкне йĕри-тавра хупăрласа илнĕ. тăшман темле чеен хăтлансан та, хăйне пĕтĕмпех аркатса тăкассинчен çăлăнса юлаймĕ». (И. Сталин)

Гитлерла Германие икĕ фронт хушшине хĕссе лартнă. Çакăнта ĕнтĕ Тегеранри конференцин историллĕ решенийĕсен калама çук пысăк пĕлтерĕшĕ курăнать, мĕншĕн тесен фашистла захватчиксене пĕр вăхăтра аркатмалла пыра-пыра çапни вăл Тегеранра йышăннă плансене пурнăçа кĕртни пулать.

Тегеранри конференци вăл аслă державăсем вăрçăра пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçленине питĕ лайăх кăтартса парать. Тегеранра гитлерла Германие пĕрле пырса çапма йышăннине çав тери чаплăн пурнăçа кĕртни — аслă союзниксем пĕр-пĕринпе тата таччăнрах пĕрлешсе ĕçленине, демократилле çĕршывсен союзĕ тата ытларах çирĕпленнине кăтартса парать. Тегеранри решенисем тăрăх сарса янă вăрçă ĕçĕсем пĕрлешнĕ нацисем çак вăрçа ăнăçлăн, тăшмана çĕнтернипе вĕçлессине пĕлтереççĕ, вĕсем тăшмана пĕтĕмпех аркатса тăкассине пĕлтереççĕ.

«Çакăн пирки иккĕленмелли çук: демократилле çĕршывсен боевой союзĕ виçĕ çул ытларах пыракан вăрçăн тĕрĕслевне тӳссе ирттерчĕ пулсан тата ăна хăйсен ирĕклĕхĕпе чыслăхне хӳтĕлеме çĕкленнĕ халăхсем юнпа пĕтĕçтерсе çирĕплетрĕç пулсан, çав союз вара вăрçăн юлашки тапхăрĕнчи тĕрĕслеве татах та ăнăçлăрах тӳссе ирттерĕ» (И. Сталин).

Тегеранри конференци вăрçă мĕнле аталанса пырассине çеç кăтартса памарĕ. вăл тата аслă державăсене нумая пыракан çирĕп мир тумашкăн пĕр-пĕринпе вăрçă хыççăн та килĕштерсе ĕçлеме никĕс хывса пачĕ. Аслă державăсем хăйсем йышăннă декларацире çапла каларĕç: пирĕн çинче —гитлерла Германие хирĕç пуринчен те ытларах кĕрешекен çĕршывсем çинче — вăрçă хыççăн мир тăвас тата ăна сыхласа тăрас тĕлĕшпе те тĕп ответлăх выртать, терĕç. Тегеранри конференцин решенийĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыни пĕтĕм тĕнчери хăрушсăрлăха организацилес ыйтăва сӳтсе-явма май пачĕ. Çакна Думбартон-Оксра конференци пухни кăтартса парать, çав конференцире чылай пысăк çитĕнӳсем тунă.

Гитлерла авантюристсем Германие хирĕçле коалицие аркатса яма ĕмĕтленнине Тегеранри конференци пĕтерсе лартрĕ. Союзлă аслă державăсем çав конференцин решенисем тăрăх пĕр-пĕринпе тата таччăнрах пĕрлешсе ĕçлеме тытăнни — тăшмана çĕнтерессипе тата вăрçă хыççăн нумая пыракан çирĕп мир тăвасси пĕрлешнĕ нацисен аллинче тăнине пĕлтерет.

* * *

Иртнĕ эрнере Хĕрлĕ Çар питĕ пысăк çитĕнӳсем турĕ. Мускаври тупăсен харăс пенĕ сассисем каллех пĕтĕм çĕршыв тăрăх саланчĕç. Толбухин Маршалăн çарĕсем Драва шывĕнчен çурçĕртерехре Дунай шывĕ урлă каçнă та Дунай шывĕн хĕвеланăç хĕрринче тăшман оборонине татнă, 40 километр таран шалалла кĕрсе кайнă, татса кĕнĕ вырăна 150 километр таран сарнă. Хĕрлĕ Çар Печ, Батажек, Мохач хулисене туртса илнĕ.

Малиновский Маршалăн çарĕсем Эгер тата Сиксо хулисене йышăннă. çак хуласем нимĕçсен Венгрири çирĕплетнĕ пăха пункчĕсем пулнă. Чехословакире те çапăçусем чарăнмаççĕ, Хĕрлĕ Çар ноябрĕн 26-мĕшĕнче Михальовце тата Гуменне хулисене тытса илнĕ.

Нимĕçсене хĕвеланăçĕнче те пыра-пыра çапаççĕ, унта вĕсене пирĕн союзниксем пĕтĕм фронт тăршшĕпех — Голландирен пуçласа Швейцари чикки патне çитиччен ех— хĕссе пыраççĕ. Пуринчен те вăйлăрах çапăçусем çурçĕрте, Аахенпа Кельн хулисем хушшинчи районра пыраççĕ. Гитлеровецсем унта чылай пысăк вăйсем пухса тăратнă. Çавăнпа та вĕсем фронтăн ытти участокĕсене çителĕклĕ хӳтĕлеме пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен фронт тăршшĕ — 600 километр. Кăнтăр енче Франципе Америка çарĕсем, ăнăçлăн наступлени туса пырса, Рейн шывĕ патне пырса тухнă, Страсбург хулине ирĕке кăларнă. Унтан çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем Меца Нанси районĕнчен наступлени туса пыраççĕ.

Гитлерла Германин лару-тăрăвĕ тата çакăн пирки те йывăрланса пырать: вăл Хĕвелтухăç фронтĕнчен хăйĕн пĕр дивизине те илсе каяймасть. Унăн икĕ фронтра çапăçма тивет. Нимĕçсене пуринчен те ытларах хăратакан ĕç пурнăçа кĕчĕ: гитлерла Германие хупăрласа илнĕ.

Çак лару-тăрăва шута илсен ĕнтĕ (вăл лару-тăрура нимĕçсем поражениссем тӳснисĕр пуçне урăх нимĕн те тума пултараймаççĕ) фашистла нимĕç обозревателĕсем калани ытла та кулăшла пулса тăрать. Вĕсем — «ĕçсем лайăх пыраççĕ-ха», теççĕ. Вĕсем, чăнах та ĕнтĕ, хăш чухне çак çул çинчен пăрăнса каяççĕ. Акă, йăлăхтарса çитернĕ Дитмар хăйĕн черетлĕ обзорĕнче çапла каланă: «Союзниксем чылай пысăк çитĕнӳсем тунине тивĕçлĕ хак памасăр» тăма çук, тенĕ. Анчах та вăл нимĕçсене халь те — «ĕнерхипе ыранхи» вăхăтсем хушшинчи «куçавлă тапхăр» халĕ те пĕтмен-ха, тесе ĕнентерме тăрăшать. Дитмар нимĕç çарĕсем тӳснĕ поражениссене тунма пултараймасть, мĕншĕн тесен вĕсене пурте пĕлеççĕ. Вăл çапла калать: «Наступлени туса пыракан тăшмана хирĕç пур çĕрте те кирлĕ чухлĕ вăй пухса тăратма эпир халь те çителĕклех вăйлă мар-ха», тет.

«Эпир халь те çителĕклех вăйлă мар-ха» тесе, Дитмар Германи хальхинчен вăйлăрах пулма пултарать, тесшĕн. Анчах та çакна пурте пĕлеççĕ: Германи çулсеренех вăйсăрланнă çемĕн вăйсăрланса пырать, çавăнпа та Германире çав радиогенерала ĕненекен ухмахсем нумаях тупăнас çук пуль.

Дитмар çавăн пек калани вăл ăнсăртран персе янă сăмах мар: гитлерла «пропаганда» çавăн пек. Ялан ӳсĕр çӳрекен Лей те хăйне итлекенсене — Германи хăйĕн çар производствине сарса яма пултарать, тесе ĕнентерме хăтланать. Анчах та çак пушă та суя сăмахсем, çак сӳпĕлтетни фактсене тĕл пулсанах арканса каяççĕ. Фактсем ак мĕне кăтартаççĕ: нимĕçсен аллинчен Никополь тухса ӳкнĕ, Балкан тухса ӳкнĕ, Венгри тухса ӳкнĕ. Ют çĕршывсенчи хаçатсем çырнă тăрăх, çакă вăл ак мĕне пĕлтерет: нимĕçсем пĕлтĕр 350.000 тонна марганец тупнă пулсан, кăçал вĕсем 70.000 тонна кăна тупнă. Çурçĕрте Петсамо, кăнтăрта Греци аллăран тухса ӳкни пирки нимĕçсем халь никель 90 процент сахалтарах илеççĕ. Финляндипе Балкан нимĕçсен аллинчен тухса ӳкнĕ пирки нимĕçсен халь молибден çук, кобальт та çукпа пĕрех. 35 миллион тонна хурçă шăратас вырăнне Германи халь 7 миллион тонна çеç шăратма пултарать. Çакăнтан ĕнтĕ пĕртен пĕр вывод çеç тума пулать: гитлеровецсен ĕçĕсем япăх, калама çук япăх пыраççĕ.

* * *

Польшăн эмиграцири правительстви кризис тӳсет. «Социалист» Квапинский правительство тума пултараймарĕ. Çак ĕçе халь Арцишевские хушнă. Арцишевский те Квапинский йышши «социалистах». Квапинские Арцишевскипе улăштарни ĕçе лайăхлатайман. Кризис халь те çавăн пекех çивĕч те шанчăксăр тăрать. Мĕншĕн тесен çакă вăл «правительство кризисĕ» çеç мар, вăл Польша эмиграцийĕн кризисĕ, вăл авалхи кризис, вăл вăхăтран вăхăта пигĕ вăйлăн палăрса каять.

Çак правительство кризисĕ мĕне пĕлтерет? Вăл ак çакна пĕлтерет: Рачкевич—Квапинский реакционерсен шайкки Миколайчика Мускава икĕ хутчен кайса калаçнине вĕçне çитерме парасшăн мар пулнă. Урăхла пулма та пултарайман. Миколайчикăн ĕçĕ вăл килĕштерме çук япаласене — хура реакципе демократие — килĕштерме хăтланнă пирки пĕтсе ларчĕ. Реакционерсен шайкки, Миколайчика Мускавпа калаçма май парса, тĕрлĕ маневрсем тунă, вăл союзлă çĕршывсем ăна Совет Союзне хирĕç пыракан политикăна пурнăçлама пулăшĕç тесе шанса тăнă. Миколайчик Мускавра калаçнине пула килĕшӳ тума май пурри палăрсан, Польша реакционерĕсем унăн ĕçĕсене пĕтерсе лартнă, ăна хăйне вырăнтан кăларнă.

Халь ак çакă нихăçанхинчен те лайăхрах палăрчĕ: Польшăн реакциллĕ ушкăнĕсен хăйсен авалхи авантюристла шухăшĕсене, Совет Союзне хирĕç пыракан планĕсене пăрахман.

Панкрута тухнă авантюристсем хăйсем кам иккенне палăртрĕç. Тӳрĕ кăмăллă поляк патриочĕсем Рачкевичпа унăн юлташĕсен шайккинче пулма пултараймаççĕ. Польша патриочĕсем пурте поляк халăхĕшĕн тăрăшаççĕ, вĕсене Поляк Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕ пĕрлештерсе тăрать.

Поляк халăхĕ Совет Союзĕпе пĕрле гитлерла Германие хирĕç хаяррăн кĕрешет. Вăл эмиграцири фашистсем майлă ĕçлекен реакциллĕ те шăршланса кайнă ушкăнсенчен тахçанах йĕрĕнсе пăрăнса кайнă.

Я. ВИКТОРОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

декабрĕн 3-мĕшĕпе 4-мĕшĕнче

ИРХИНЕ

«ТИМУРПА УНАН КОМАНДИ»

ятлă саслă илемлĕ фильм кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
12, 14, 16 сехетре.

КАÇХИНЕ

А. Н. Островский драми тăрăх ӳкернĕ

«ГРОЗА»

ятлă саслă илемлĕ фильм кăтартаççĕ.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
18, 20, 22 сехетре.

ЧАСАХ

американецсен саслă, илемлĕ

«ПЕСНЯ О РОССИИ»

ятлă çĕнĕ фильмне кăтартма пуçлаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительне секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

КТ 04226 Типографи № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 ...

Тираж 16.000 экз.